27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ФЕВРАЛЬ 23 ЭРНЕКУН 35(6786) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗЕ

1945 çулхи февралĕн 23-мĕшĕ. №5. Мускав хули

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем! Паян эпир Хĕрлĕ Çар XXVII çул пурăнса ирттернине уявлатпăр.

Аслă Ленин хамăрăн Тăван çĕршыва ютçĕршыв захватчикĕсем тапăнассинчен хÿтĕлеме тунă тата большевиксен партийĕ пăхса çитĕнтернĕ Хĕрлĕ Çар хăй аталанăвĕн чаплă çулне утса тухрĕ. Вăл хăйĕн историллĕ тивĕçлĕхне чыслăн тÿрре кăларчĕ, вăл тивĕçлипех совет халăхĕн юратнă ывăлĕ пулса тăчĕ. Граждан вăрçи çулĕсенче Хĕрлĕ Çар çамрăк Совет государствине нумай тĕрлĕ тăшмансенчен хÿтĕлесе хăварчĕ. Нимĕçсем тапăнса кĕнине хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçăн аслă çапăçăвĕсенче Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕнчи халăхсене фашистла нимĕç чуралăхĕнчен çăлса хăварчĕ, хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлесе хăварчĕ тата Европăри халăхсене нимĕç чуралăхне сирсе пăрахма пулăшрĕ.

Хĕрлĕ Çар çирĕм çичĕ çул тултарнине эпир, тăшмана аркатса пырса, историллĕ çĕнĕ çĕнтерÿсем тунă вăхăтра кĕтсе илетпĕр. Хĕрлĕ Çар тăван çĕре гитлерла ирсĕрсенчен ирĕке кăларчĕ кăна мар, тăшмана пирĕн çĕршыв çине нимĕçсем вăрă-хурахла тапăннă рубежсенчен леш еннелле нумай çĕр километра çити сирсе ывăтрĕ, вăрçа Германи территорийĕ çине куçарчĕ, халĕ ĕнтĕ хамăрăн союзниксен çарĕсемпе пĕрле пулса, фашистла нимĕç çарне çапса аркатас ĕçе ăнăçлăн вĕçлесе пырать.

Кăçалхи январь уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар Балтикăран пуçласа Карпат патне çитиччен сарăлса выртакан мĕнпур фронтра тăшмана халиччен нихăçан пулман вăйпа пырса çапрĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕçсен оборонине, вĕсем темиçе çул хушши туса пынăскерне, 1.200 километр тăршшĕ çĕмĕрсе пăрахрĕ. Наступлени туса пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çар, хăвăрттăн та ăста кĕрешсе, тăшмана хĕвеланăçнелле инçете сирсе ывăтрĕ. Совет çарсем, тăшманпа вăйлăн çапăçса, Хĕвелтухăç Прусси чиккисем патĕнчен Висла шывĕн анатри тăрăхне çити—270 километр, Висла шывĕ çинчи Варшава хулинчен кăнтăртарахри плацдармран пуçласа Одер шывĕн анатри тăрăхне çити—570 километр, Сандомир плацдармĕнчен пуçласа нимĕç Силезийĕ ăшнелле—480 километр малалла кайрĕç.

Пирĕн хĕллехи наступленин ăнăçăвĕсем, пуринчен малтан, нимĕçсен Хĕвеланăçĕнчи хĕллехи наступленине, Бельгипе Эльзаса тытса илес тĕллевпе тунăскерне, путлантарса лартрĕç тата пирĕн союзниксен çарĕсене хăйсем енчен нимĕçсене хирĕç наступлени пуçласа яма, çапла вара хăйсен Хĕвеланăçĕнчи наступленийĕ операцийĕсене Хĕрлĕ Çарăн Хĕвелтухăçĕнчи наступленийĕ операцийĕсемпе çыхăнтарма май пачĕç.

1945 çулхи январьпе февраль уйăхĕсенче 40 кун хушши наступлени туса пырса, пирĕн çарсем нимĕçсене 300 хуларан хăваласа кăларчĕç, танксемпе самолетсем, хĕçпăшалсемпе боеприпассем тăвакан 100 завода çити тытса илчĕç, 2.400 чугун çул станцине ытла йышăнса илчĕç, 15.000 километр ытла тăсăлса выртакан чугун çулсене туртса илчĕç. Çав кĕске вăхăт хушшинче Германин 350.000 салтакĕпе офицерĕ ытла тыткăна лексе тата 800.000 салтакĕпе офицерĕнчен кая мар вилсе пĕтрĕç. Çав вăхăт хушшинчех Хĕрлĕ Çар нимĕçсен 3.000 самолетне яхăн, 4.500 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине ытла тата 12.000 кая мар туппине пĕтерсе тăкрĕ е тытса илчĕ.

Çакăн хыççăн ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар пĕтĕм Польшăна тата Чехословаки çĕрĕн чылай пысăк пайне ирĕке кăларчĕ, Будапешт хулине йышăнса илчĕ. Германин Европăри юлашки союзникне — Венгрие вăрçăран кăларса пăрахрĕ, Хĕвелтухăç Пруссипе нимĕç Силезийĕн чылай пысăк пайне туртса илчĕ тата хăй валли Бранденбурга, Померание, Берлин патне пымалли вырăнсене кĕрсе кайма çул уçрĕ.

Гитлеровецсем Германи çĕрĕ çинче çĕр çул ытла неприятелĕн пĕр салтакĕ те пулман тесе тата нимĕç çарĕ ют çĕрсем çинче çапăçнă, малашне те ют çĕрсем çинче кăна çапăçĕ тесе каппаятчĕç. Халĕ ĕнтĕ нимĕçсем каппайнине пĕтерсе лартнă.

Хĕллехи наступлени çакна кăтартса пачĕ: Хĕрлĕ Çар кăткăсрах та йывăртарах задачăсене татса пама çĕнĕрен-çĕнĕ вăйсем тупса пырать. Унăн чаплă воинĕсем халĕ ĕнтĕ тăшмана кучуххехи вăрçă наукин мĕнпур правилисем тăрăх çапа-çапа аркатма, пĕтере-пĕтере тăкма вĕренсе çитрĕç. Халăхсене ирĕке кăлармалли хăйсен аслă тивĕçне ăнланнипе хавхаланнă пирĕн боецсем геройлăхпа хастарлăхăн тĕлĕнмелле чаплă тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ, çапăçура хăйсен хастарлăхĕпе хăюлăхне хăйсен хĕçпăшалĕн вăйĕпе тата хăвачĕпе туллин усă курнипе пĕлсе пĕтĕçтерсе пыраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн генералĕсемпе офицерĕсем тăшмана хăватлă техникăпа йышлăн пыра-пыра çапас ĕçе ăста та хăвăрт туса ирттерекен маневрпа мастерла пĕтĕçтерсе пыраççĕ. Вăрçăн тăваттăмĕш çулĕнче Хĕрлĕ Çар нихăçанхинчен те çирĕпрех те вăйлăрах пулса тăчĕ, унăн çапăçу техники татах та ытларах лайăхланчĕ, çапăçури ăсталăхĕ вара нумай хут ÿсрĕ.

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем!

Нимĕçсене пĕтĕмĕшпех çĕнтересси çывăхра ĕнтĕ. Анчах çĕнтерÿ нихăçан та хăй тĕллĕн пулмасть,—ăна йывăр çапăçусенче тата хĕрÿ ĕçре çĕнтерсе илмелле. Вилĕм шăпи умĕнче тăракан тăшман çапăçăва хăйĕн юлашки вăйĕсене кĕрте-кĕрте ярать, хаяр таврăнуран çăлăнса юлас тесе, урса кайсах хирĕç тăрать. Вăл кĕрешÿре чи юлашки те чи ирсĕр майсемпе усă курма хăтланать, усă курма хăтланĕ те. Çавăнпа та ĕнтĕ çакна асра тытмалла: пирĕн çĕнтерÿ мĕн чухлĕ çывăхрах, пирĕн сыхлăх çавăн чухлĕ пысăкрах пулмалла, пирĕн тăшмана çавăн чухлĕ вăйлăнрах пыра-пыра çапмалла.

Совет Правительстви тата пирĕн большевиксен мухтавлă партийĕ ячĕпе Сире Хĕрлĕ Çар XXVII çул тултарнă май саламласа, ырă сывлăх сунатăп!

Совет Государствин хĕçпăшаллă вăйĕсем иртнĕ çулталăк хушшинче тунă аслă çĕнтерÿсене палăртса хăварас майпа, çапла ПРИКАЗ ПАРАТĂП:

Паян, февралĕн 23-мĕшĕнче, Хĕрлĕ Çар XXVII çул тултарнă кун, çирĕм сехетре, Мускавра, Ленинградра, Киевра, Минскра, Петрозаводскра, Таллинра, Ригăра, Вильнюсра, Кишиневра, Тбилиссире, Сталинградра, Севастопольте, Одессăра, Львовра артиллерирен çирĕм хут пĕр харăс персе салют памалла.

Сывă пултăр пирĕн çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн çĕнтерÿллĕ Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр пирĕн хăватлă Совет Çĕршывĕ!

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешсе вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут господин, Премьер-Министр Эд. Осубка-Моравский господин тата Польша çарĕн главнокомандующийĕ М. Роля-Жимерский генерал-полковник Мускавра пулни çинчен

Февралĕн 14-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче Мускавра пулнă вăхăтра Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут господин, Польша Республикин Вăхăтлăх Правительствин Премьер-Министрĕпе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Эд. Осубка-Моравский господин, Польша çарĕн главнокомандующийĕ М. Роля-Жимерский генерал-полковник СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕпе И. В. Сталинпа тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕпе В. М. Молотовпа калаçнă. Вăл калаçусенче Совет Союзĕ Варшавăна юсама пулăшас ыйтăва, çавăн пекех тата Совет Союзĕпе Польша хушшинчи çыхăнусен черетлĕ ыйтăвĕсене сÿтсе-явнă.

Калаçусенче Совет Союзĕн Польшăри Посолĕ В. З. Лебедев тата Совет Союзĕн Польшăри çар миссийĕн начальникĕ С. С. Шатилов генерал-лейтенант пулнă.

И. В. Сталин юлташăн кĕнеки тухать

Чăвашгосиздат И. В. Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине пичете панă. Вăл кăçал Мускавра Госполитиздатра вырăсла тухнă 4-мĕш изданипе пĕр пек пулать. Малтанхи материалсем пуçне, ку изданире И. В. Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революцин 27 çул тултарни çинчен тунă доклад тата 1944 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнчи приказ кĕрет.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЗЕМЛАНД çурутравĕнче тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă. Унта тăшман пысăк çухатусем тÿсет пулин те, КЕНИГСБЕРГ хулинчен хĕвеланăçнелле, ПИЛЛАУ хули патнелле татса тухасшăн çапăçать. Кунпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕç çарĕсен Хĕвелтухăç Пруссири группировкине хупăрласа илнĕ унка малалла хĕссе пынă, АЛЬБЕНЛАУК, НЕМРИТТЕН, КАНДИТТЕН, ГУТТЕНФЕЛЬД, АЙХХОЛЬЦ, ВОЛАУ, ГАУДЕН, ПАКХАУЗЕН, БОРХЕРТСДОРФ ялĕсене туртса илнĕ.

КЕНИГСБЕРГ хулинчен хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра февралĕн 19-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсен 70 танкне çĕмĕрсе тăкнă, тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ДАНЦИГ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем ВИСЛА шывĕн хĕвеланăç хĕррипе наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла çапăçса туртса илнĕ, вăл шутра—МЮНСТЕРВАЛЬДЕ, ХАЛЬБДОРФ, ЛЯЛЬКАУ, ЯШЕРСК, КАСПАРУС, ЛИНОВЕГ, ГРОСС ШЛИВИЦ, ГАГЕНОРТ, ШЛЯХТА ятлă пысăк ялсем.

ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хулинче хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

БРАНДЕНБУРГ провинцийĕнче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. ГРОССЕН, БОБЕРСБЕРГ, ХРИСТИАНШТАДТ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—АЛЬТ, РЕФЕЛЬД, НОЙЕНДОРФ, ЛИНДЕНХАЙМ, ШЕГЕЛЬН, ДАУБЕ, ЛАУБНИЦ, ГУРКАУ, МАРСДОРФ, БУРАУ ятлă пысăк ялсем.

Февралĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем ку районра пĕр пин нимĕç салтакĕпе офицерне яхăн тыткăна илнĕ.

БРЕСЛАУ районĕнче пирĕн çарсем хулара хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

Чехословакире ЛУЧЕНЕЦ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Карпат тăвĕсен тăрăхĕнчи сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче кĕрешсе, халăх пурăнакан 60 пункта ытла çапăçса туртса илнĕ, вăл шутра—СКЛЯРОВО, ДУБРАВИ, ДЕТВА, КРИВАНЬ, ДРУГАЙОВЦЫ, СТАРА ГУТТА, ЧЕРВЕНА ятлă пысăк ялсем.

ДУНАЙ шывĕн çурçĕр хĕрринче, КОМАРНО хулинчен хĕвелтухăçнерехре, пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă. Февралĕн 19-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем ку районра нимĕçсен танкне çĕмĕрсе тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пункта тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 19-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 206 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 109 самолетне персе ÿкернĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 21-мĕшĕнче ЗЕМЛАНД çурутравĕнче, КЕНИГСБЕРГ хулинчен хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем тăшманăн КЕНИГСБЕРГ хулинчен ПИЛЛАУ еннелле татса тухма хăтланнă пехотипе танкĕсен атакисене сирсе тăнă, вăйлă çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан темиçе пунктран тухса кайнă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири группировкине хупăрласа илнĕ унка хĕссе пынă, ШВЕНГЕЛЬС, МАГГЕН, АУГАМ, ВОРШИНЕН, БЛУНШТАЙН, ПЕТЕРСВАЛЬД, ХОВЕНДОРФ, ШТРАУБЕНДОРФ, ШЕНДАМЕРАУ ятлă ялсене туртса илнĕ. КЕНИГСБЕРГ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре февралĕн 20-мĕшĕнче нимĕçсен 60 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине пĕтерсе тăкнă.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, февралĕн 21-мĕшĕнче ЧЕРСК хулине—çулйĕрсен пахă узелне тата нимĕçсен Çурçĕр-хĕвеланăç Польшăри оборонин вăйлă тĕрек летнĕ пунктне — çапăçса туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, çав шутра—ЕЗЕВИЦ, НИХТСФЕЛЬДЕ, ПЕРСКЕРФЕЛЬДЕ, КИРХЕНЯН, ОССИК, ОЦЦЕПЕЛЬ, ШЕМБЕРГ ятлă пысăк ялсем.

БРАНДЕНБУРГ провинцийĕнче пирĕн çарсем ПФЕРТЕН, ПРИБУС хулисене çапăçса туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, çав шутра—ЛАМО, КУШЕРН, ФОРШТАДТ, ГЕРЕННИВЕРЛЕ, ЦШЕХЕЛЬН, ГРЕХЕНАЛЬН, ГРОСС-ЗЕЛЬТЕН, ЛАЙПА ятлă пысăк ялсем. Февралĕн 20-мĕшĕнче çав районра пирĕн çарсем нимĕçсен 49 танкне пĕтерсе тăкнă.

БРЕСЛАУ районĕнче пирĕн çарсем çав хулара хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

ДУНАЙ шывĕн çурçĕр хĕрринче, КОМАРНО хулинчен хĕвелтухăçнерехре, пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сирсе тăнă. Февралĕн 20-мĕшĕнче çав районра нимĕçсен 38 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 20-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 180 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 67 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ НИМĔÇСЕН ШТЕТТИН, ШТАРГАД ТАТА БРЕСЛАУ ХУЛИСЕНЧИ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕНЕ ТАТА ВĂРÇА ОБЪЕКЧĔСЕНЕ ТАПАННИ

Февралĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн йывăр бомбардировщиксем Штеттин тата Штаргард хулисенчи чугун çул узелĕсене тата вăрçă объекчĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула, вăйлă пушарсем тухнă. Чугун çул эшелонĕсем тата тăшманăн çар склачĕсем çуннă. Штаргардри чугун çул узелĕнче уйрăмах вăйлă пушарсем тухнă, унта вăйлă взрывсем пулнă. Пирĕн авиаци çавăн пекех тата Бреслау хулинчи промышленноçпа вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тÿрĕ лекнипе пĕр çар завочĕ ишĕлнĕ. Нимĕç çарĕсен хупăрласа илнĕ группировки районĕнче пушарсем тухнă, вăйлă взрывсем пулнă.

Трофей хĕçпăшалĕсен выставкине çĕнĕ экспонатсем пыраççĕ

Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă тĕле трофей хĕçпăшалĕсен выставкине çĕнĕ экспонатсем илсе пыраççĕ.

Белоруссири 2-мĕшпе 3-мĕш фронтсенчен «королевски тигр» йышши виçĕ танк илсе пынă. «Королевски тигрăн» çÿллĕшĕ 3 метр ытла, тăршшĕ—7 метр, сарлакăшĕ—4 метра яхăн. Малти броньăн хулăнăшĕ 150 миллиметр, башньăри броньăн—180 миллиметр, айккинчи броньăн—80 миллиметр. Танк 68 тонна таять, ахаль «тигртан» вăл нумай йывăртарах. 80 миллиметр сарлакăш гусеницăсем ăна çÿреме пултаракан тăваççĕ. Апла пулин те «королевски тигр» йышши танка та совет хĕçпăшалĕ çĕмĕрет. Халĕ илсе пынă танксем (персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янăскерсем) Германин çĕнĕ йышши хĕçпăшалне пирĕн артиллеристсем те, танкистсем те, бронебойщиксем те çĕмĕрме пултарнине кăтартаççĕ.

Совет Союзĕн Поляр хыçĕнчи çĕрĕ çинче нимĕçсем нумай пурăнма хатĕрленнĕ. Вĕсем унта сÿтекен салтак юртисем тата нарта çинчи пĕчĕк çуртсем илсе пынă. Выставкăра вĕсем те часах пулĕç. Выставкăра артиллерирен персе тăрассине йĕрлекекен «Пуазо—44» йышши прибор, минăсем тата минăпа торпеда хĕçпăшалĕсем, çĕр чавмалли инструментсем тата инженерла ытти хатĕрсем те курма пулĕ. Курма пыракансем кунта Германи çарĕн артиллерири çĕнĕ япалисене—«Фауст-патронсене», эрзац-апат курма пултарĕç.

Будапештран выставкăн интендант отделне нимĕçсен 2.000 ытла орденĕсене янă. Вăл орденсене тăшман группировкине аркатса тăкнă чухне тытса илнĕ. Çавăн пекех çул çинче гитлеровецсем Будăна хÿтĕлеме хăтланнă 128 миллиметрлă зениткăсем тата унта тытса илнĕ транспорт машинисем пулаççĕ.

Çывăхри вăхăтрах çак экспонатсене выставкăра пурте курма пултарĕç. (ТАСС).

САРАТОВПА МУСКАВ ХУШШИНЧИ ГАЗОПРОВОДА ТУНĂ ÇĔРТЕ

Саратовпа Мускав хушшинчи газопровода тунă çĕрте ĕçсем палăрмаллах йышăланса пыраççĕ: трубăсем турттараççĕ, материалсем хатĕрлеççĕ, экскаваторсем, кăна чавакан машинăсем тата ытти тĕрлĕ оборудованисем илсе пыраççĕ.

Саратов районĕнче строительствăн [illegible] малли участокне, «Пĕчĕк газопровод» ятлăскерне, [illegible] пĕтерне. Унта хаяр трубопровода [illegible] пăхаççĕ. Газопровод тумалли çул çинче 7 районра строительсем валли çуртсем тăваççĕ. Мускавра, Саратовра, Бакура, Уфара, Сызраньре тата Коломнăра квалификациллĕ рабочисем хатĕрлемелли курсем ĕçлеме пуçланă.

Юр ирĕлсенех газопровод хывмалли вырăнсенче пурин те траншейсем чавма пуçлаççĕ. Гусеницăллă крансем, трубăсем хума тытăнаç [illegible] трубăсене хĕртсе çыпăçтарма тытăнаççĕ. (ТАСС).

ОДЕР ШЫВĔ УРЛА КАÇМАЛЛИ КĔПЕРСЕМ

Кĕперсем тăвакан пĕр заводри рабочисемпе специалистсем юлашки кунсенче талăкри задание ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Ĕртсе пыракан цехсем—шăтарса çыпăçтаракан тата хĕртсе çыпăçтаракан цехсем—ĕнер плана 118 процент тултарнă.

Завод коллективĕ срокченех икĕ кĕпер пухса хатĕрленĕ. Вăл кĕперсене Одер шывĕ урлă хывма тунă. (ТАСС).

Берлин çине!

Тăшман пуçне çапать вилĕм сивви.
Тăшман туять: юлашки кунĕ çывăх.
Чĕтрет Берлин—çĕлен-калта йăви.
Вут-çулăмра чуниллисен çĕршывĕ!

Вут-çулăмра нимĕç ял-хулисем.
Фрицсем çавна тивĕç, çавна шырарĕç.
Мур-йăх урса кайса тулашнăçем
Ана хытрах çĕмретĕ Сталин çарĕ.

Кĕрлеççĕ тупăсем—вăрçă турри.
Арăсланчĕ юнлă вăрçă вуткăварĕ.
Сталинградран утнă салтак ури
Паян нимĕç çĕрне çитсе таптарĕ.

Тĕнче тискере—юнĕçенсене
Пур халăхсен хаяр ылханĕ витрĕ.
Нимĕç пире кÿнĕ инкек тинех
Халь хăй килне калла çаврăнса çитрĕ.

Ак, килчĕ, килчĕ эпĕр кĕтнĕ кун.
Çил акрĕ Гитлер—вуттăвăл туянчĕ.
Пиртен ниçта та çăлăнăç çук ун.
Вут аслати мур пуçĕ çине анчĕ.

Аслати мар, ку—таврăну вутти.
Ку—тĕрĕслĕх кÿрен Ирĕклĕх çарĕн
Хăватлă, йывăр, улăпла утти
Германие кисрентерет хаяррăн.

Унпа пырать хаяр та аслă суд.
Вăл халăхшăн, çĕршывшăн тупа турĕ:
Нихçан, нихçан та нимĕç тепĕр хут
Пирĕн çине хĕç ан çĕклетĕр урăх.

Çавна кĕтеççĕ халăхсем пиртен.
Çавна тума пире хĕçпăшал панă.
Нихçан, нихçан та урăх çав çĕртен
Ан килтĕр тек этемлĕхĕн тăшманĕ.

Этем тискересем ÿснĕ йăва
Салантăр, çунтăр, упран кĕл çеç юлтăр.
Нихçан, нихçан та пирĕн çĕршыва
Кунтан урăх инкек кÿни ан пултăр.

Çĕршыв çапла хушать. Чĕресенче —
Ун шанчăкĕ, ун вăйĕ, ун мухтавĕ.
Берлин çине! Тăшман йăви çинче
Вĕçтĕр пирĕн çут çĕнтерÿ ялавĕ!

УЙАП МИШШИ.

Çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çара—производствăллă парнесем

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри цехсем, Хĕрлĕ Çар уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, февраль уйăхĕнчи плана срокчен тултарма пулнăччĕ. А. Буйволов юлташ начальник пулса ĕçлекен цех хăйĕн обязательствине пурнăçланă. Вăл уйăхри плана февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне 101 процент тултарнă. Халĕ цех коллективĕ планран ирттерсе продукци туса кăларать.

Уяв умĕнхи ăмăртура цехри аслă мастерсем Малыхин, Мензуров, Хворост тата мастерсем, Суетин, Точилин юлташсем лайăх ĕçленĕ. Маркина, Шалихов, Камина, Исакова тата ытти стахановецсем уйăхри задание 2 хут ирттерсе тултарнă.

* * *

УЛАТАР, февралĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Паровозсем юсакан заводри бригадăсемпе стахановецсем Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнине ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕç. Уяв ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, вĕсем ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Кустăрмасем тăвакан цехри токарьсем Либерманпа Горячев юлташсем нормăна кулленех 300 процент ытла тултараççĕ. Механически цехри (начальникĕ СССР Верховный Совет депутачĕ Моисеева юлташ) Легостинăпа Егоров токарьсем нормăран 3 хут, Яшинпа Мухрыгин юлташсем 2 хут тухăçларах ĕçлеççĕ.

Çак кунсенче механически цехăн пĕтĕм коллективĕ хавхаланса ĕçлет. Цех кулленхи графика тикĕс тултарса пырать.

Паровоз хуранĕсем юсакан бригадăсене (бригадирĕсем Григорьевпа Бурмистров юлташсем) васкавлă задани панă. Хĕрлĕ Çара парне кÿрес тесе, вĕсем çав задание срокчен пурнăçланă.

* * *

КАНАШ, февралĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар уявĕ ячĕпе пынă ăмăртура вагонсем юсакан заводри цехсенчен Жебрак юлташ ертсе пыракан цех мала тухнă. Ку цех пĕр йышши изделисем туса кăлармалли задание ирттерсе тултарнă. Уяв умĕнхи ăмăрту кунĕсенче цехри токарьсем Кирилюк, Лозовой, Симкина тата Корякина юлташсем 4-шар норма тултарса ĕçленĕ.

Князев юлташ цехĕнчи стахановецсен ĕçĕ питех те тухăçлă. Нумай станоксемпе ĕçлекен Черная, Абрамова тата Фомина юлташсем куллен 5-шер норма тултараççĕ. Çавăншăн вĕсене заводри чи лайăх стахановецсен ятне панă.

* * *

Вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăха хутшăнса, республикăри чылай районсемпе вăрман хуçалăхĕсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕччĕ. Куславкка районĕпе Кире вăрман хуçалăхĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтри вăрман ĕçĕсен планне пур ассортиментсем тăрăх та тултарнă, хатĕрленĕ вутта тата ытти материалсене планран ирттерсе турттарса панă. Çавăн пекех вăрман ĕçĕсен пĕтĕм планне Чурачăк, Шăхасан, Первомайски районсем, Йĕпреç, Вăрнар, Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕсем хатĕрлес енĕпе тултарнă, вĕсем турттарас енĕпе те малта пыраççĕ.

Чугун çул валли вутă хатĕрлесе тата турттарса памалли плана Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне республикăри 5 район—Куславкка, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри тата Первомайски районсем тултарнă. Вăрмарпа Шăхасан районĕсем те çак ĕçĕн планне вĕçлесе пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çаршăн пурте хатĕр

Пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче пирĕн Анатри Кипекçĕ ялĕнчи хресченсен хуçалăхĕ, çĕршыври ытти хресченсенни пекех, чухăнланса, юхăнса юлнă. Акман çĕр нумай юлнă, лашасăр хуçалăхсен шучĕ çурри ытла пулнă. Ялта выçлăх, тĕрлĕ чир-чĕр саралнă. Пирĕн ялти хресченсем вăрçă хыççăн нумайччен хăйсен хуçалăхне ура çине тăратайман.

1929 çулта 28 хуçалăхран колхоз пуçланса кайрĕ. Вăл кашни кун ÿссе çирĕпленсе пычĕ, хăй тавра ялти чухăн тата вăтам хуçалăхсене пĕрлештерчĕ. Часах пирĕн «Ĕмĕт» колхоз малта пыракан колхозсен шутне кĕчĕ. 1939-мĕшпе 1940-мĕш çулсенче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулчĕ. Тырă тухăçлăхне ÿстерес тесе лайăх кĕрешнĕшĕн эпир Главыставкомăн 2-мĕш степеньлĕ дипломне илме тивĕçлĕ пултăмăр.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансан, вăйпитти те ĕçри опытлă арçынсем вăрçа тухса кайрĕç. Хĕрлĕ Çара лашасем те нумай парса пулăшма тиврĕ. Анчах та пирĕн колхоз ÿсĕмĕ чакмарĕ. Арçынсем выранне хĕрарăмсем ĕçе тăчĕç. Вĕсем кунĕнçĕрĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Пирĕн ĕçлени ахаль пулмарĕ эпир вăрçăчченхинчен нумайрах тырпул туса илме пуçларăмăр. Ана çак тĕслĕхсем лайăх çирĕплетсе параççĕ. Вăрçă умĕнхи 1940 çулта пирĕн колхоз 4108 центнер тĕштырă пухса илнĕ, 1944 çулта 5399 центнер пухса илтĕмĕр. Вăрçăччен 1944 центнер çĕрулми илнĕ пулсан, 1944 çулта 5500 центнер илнĕ. 1-мĕш бригада (бригадирĕ Семенов юлташ) кашни гектартан 22,6 центнер кĕрхи тулă, 29,34 центнер вир пухса илчĕ. 2-мĕш бригада (бригадирĕ Д. Михайлов юлташ) кашни гектартан 24,4 центнер вика илчĕ, 3-мĕш бригада (бригадирĕ А. Яковлева юлташ) кашни гектартан 23,5 центнер ыраш, 4-мĕш бригада (бригадирĕ И. Николаев юлташ) кашни гектартан 21,2 центнер урпа, 286 центнер çĕрулми пухса илчĕ.

Тырă тухăçлăхне тăтăшах ÿстерсе пыни Хĕрлĕ Çара тырпулпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем ытларах пама май кÿчĕ. Кăçал эпир государствăна тата Хĕрлĕ Çара, 1940 çулхипе танлаштарсан, тĕштырă 4 хут ытла, çĕрулмипе пахча-çимĕç 3 хут, аш-какай 2 хут, сĕт-çу 2 хут, çăмарта 2 хут ытларах панă. Ку шута колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне, Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшалсем тунă çĕре панă тырпулпа укçа-тенкĕсем кĕмеççĕ.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх шучĕ те, вĕсен пахалăхĕпе продуктивноçĕ те ÿссех пырать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур енчен те тултарса пынăшăн пирĕн колхоз иккĕмĕш çул ĕнтĕ Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хăй аллинче тытса тăрать. Вăрçăн йывăр çулĕсенче те пирĕн 3 хуçалăх çĕнĕ пÿртсем лартрĕç. Колхозра ĕнесĕр хуçалăхсем çук. Пирĕн колхозниксем пуян пурнăçпа пурăнаççĕ. Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине эпир яланах çителĕклĕ таран пама пултаратпăр.

М. СКВОРЦОВ,
Çĕрпÿ районĕнчи «Ĕмĕт» колхоз председателĕ.

Сталинла премисем валеçекен комитетра

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Наукăпа изобретательство ĕçĕсемшĕн Сталинла премисем валеçекен комитет 1943 тата 1944 çулсемшĕн Сталинла премисем пама тивĕçлĕ ĕçсене пăхса тухма тытăннă.

Комитет пленумĕ секцисен составĕсене çирĕплетнĕ.

Чудаков академик ертсе пыракан техника секцийĕ ĕçе тытăннă та ĕнтĕ. Секцире пăхса тухма 300 ытла ĕç тăратнă. Вĕсем хушшинче строительство ыйтăвĕпе интереслă ĕçсем пур, çăмахран, домна кăмакисене хăварт туса хумалли çĕнĕ меслетсем çинчен Н. И. Лукашкинпа В. Э. Дымшиц ертсе пыракан коллективсем тăратнă ĕç пур. Çав коллектив меслечĕпе усă курса, Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Чусовойпа Магнитогорскри домнăсене тунă. Çулйĕр Халăх Комиссариачĕпе Наркомстрой работникĕсен ушкăнĕ кĕпере çĕнĕ конструкцийĕсене хăварт тумалли çинчен тата чугун çул кĕперĕсене хăварт юсамалли çинчен çырнине тăратнă.

Кунсăр пуçне Комитета наукăпа техника тĕлĕшĕпе нумай çулсем хушши ĕçленĕшĕн премилемелли ĕçсене тăратнă. Вĕсен авторĕсем хушшинче Поздюнин академик. Наука академийĕн член-корреспонденчĕ Стрелецкий, Герсеванов, Украина ССР-ĕнчи Наука академийĕн членĕ Динник, Азербайджанри Нефть институчĕн профессорĕ Есьман, Мускаври ялхуçалăх механизацийĕпе электрификацийĕ институчĕн профессорĕ Мерцалов т. ыт. те пур.

Çавăн пекех тата медицина наукисен секцийĕн пирвайхи ларăвĕ пулса иртнĕ. Ăна Абрикосов академик ертсе пырать. Вăл секцие пăхса тухма 70 ĕç тăратнă.

А. Н. Боголюбова тата К. П. Трубникова çар званийĕ—генерал-полковник ятне парасси синчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнче йышăннă Указĕ тăрăх тунă çар званине—генерал-полковник ятне çаксене парас:

Александр Николаевич БОГОЛЮБОВА.

Кузьма Петрович ТРУБНИКОВА.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи февралĕн 17-мĕшĕ.



Белоруссири 2-мĕш фронт штабĕн начальникĕ генерал-полковник А. Н. Боголюбов—пирĕн чаплă земляк, вăл Шупашкар çынни.

СССР Верховный Совет Президиумĕнче

Хĕрлĕ Çарта 25 çул тата ытларах пулнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх, çар служби срокĕ тухнă маршалсене, генералсене, офицерсене тата сержантсене Ленин орденĕ парса наградăланă.

Наградăланисем хушшинче çаксем пур: Совет Союзĕн Маршалĕсем — **С. М. Буденный, А. М. Василевский, К. Е. Ворошилов, Л. А. Говоров, Г. К. Жуков, И. С. Конев, Р. Я. Малиновский, К. А. Мерецков, К. К. Рокоссовский, С. К. Тимошенко, Ф. И. Толбухин, Б. М. Шапошников.**

Артиллерин Главнăй Маршалĕ **Н. Н. Воронов.**

Авиацин Главнăй Маршалĕ **А. А. Новиков.**

Авиаци Маршалĕсем — **Ф. А. Астахов, Г. А. Ворожейкин, Ф. Я. Фалалеев, Ф. А. Худяков.**

Артиллери Маршалĕсем—М. Н. Чистяков, Н. Д. Яковлев.

Бронетанковăй çарсен Маршалĕсем — П. А. Ротмистров, Я. Н. Федоренко.

Инженери çарĕсен Маршалĕ М. П. Воробьев.

Арми генералĕсем—А. И. Антонов, А. И. Еременко, Г. Ф. Захаров, И. И. Масленников, И. Е. Петров, М. А. Пуркаев, В. Д. Соколовский, И. В. Тюленев, А. В. Хрулев.

Генерал-полковниксем—Б. А. Артемьев, П. И. Батов, П. А. Белов, А. Н. Боголюбов, К. Н. Галицкий, В. В. Глаголев, Ф. И. Голиков, А. В. Горбатов, В. Н. Гордов, Д. Н. Гусев, А. С. Жадов, М. В. Захаров, М. П. Ковалев, В. Я. Колпакчи, К. А. Коротеев, Н. И. Крылов, В. В. Курасов, П. А. Курочкин, М. С. Малинин, А. П. Покровский, В. М. Попов, Н. П. Пухов, М. А. Рейтер, П. С. Рыбалко, Л. М. Сандалов, И. В. Смородинов, С. Г. Трофименко, И. И. Федюнинский, В. А. Фролов, М. С. Хозин, В. Д. Цветаев, Н. Е. Чибисов, И. М. Чистяков, В. И. Чуйков, М. С. Шумилов, Е. А. Щаденко.

Танковăй çарсен генерал-полковникĕсем — **Ф. И. Богданов, В. Т. Вольский, М. Е. Катуков, А. Г. Кравченко.**

Авиаци генерал-полковникĕсем — **К. А. Вершинин, С. К. Горюнов, С. А. Красовский, Н. Ф. Науменко, Ф. Д. Рыбальченко, М. Ф. Шиманов.**

Генерал-лейтенантсем—**В. Р. Вашкевич, Ф. К. Корженевич** тата ыттисем те.

Фронтран килнĕ саламсем

Тăшманăн шăпи тулчĕ



Паттăр Хĕрлĕ Çар совет çĕршывне гитлерла вăрă-хурахсенчен тасатса çитерчĕ, хамăр государствăн чиккисене пĕтĕмĕшпех юсаса йĕркелерĕ. Халĕ ĕнтĕ совет воинĕсем, фашистла тискер кайăка хăйĕн йăвине хăваласа кĕртсе, ăна унта çĕмĕреççĕ. Тăшманăн шăпи тулчĕ. Хĕрлĕ Çар фашистсен столици—Берлин хули патнелле хăватлăн тапăнса пырать. Нумай та вăхăт иртмĕ, Хĕрлĕ Çар, хамăр союзниксен çарĕсемпе пĕрле, ылханлă тăшмана аркатса тăкса, Берлин çине çĕнтерÿ ялавĕ çĕклĕ.

Тăшманăн юлашки кунсем юлчĕç. Крымри конференцире фашистла Германие пуçĕпех çапса аркатмалли плансене тĕплĕн палăртса хунă. Анчах çĕнтерÿ хăй тĕллĕн пулмасть. Аманнă тискер кайăка хăвăртрах çапса вĕлерес тесен, пирĕн фронтра та, тылра та татах та ытларах вăй хурса кĕрешмелле, ĕçлемелле.

Эпĕ хамăн тăван чăваш халăхĕпе мухтанса савăнатăп. Çĕнтерÿ хĕçпăшалне вăл пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле туптаса пычĕ. Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем, Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче хастаррăн çапăçса, тăван халăхăн чапне татах та ытларах ÿстерчĕç.

Манăн хаклă земляксем, тăван республикăри рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, интеллигенципе çамрăксем, çĕнтерÿ кунне хăвăртрах çывхартас тесе татах та ытларах вăй хурса ĕçлĕр! Сирĕн тылри çĕнтерÿ вăл—пирĕн фронтри çĕнтерÿ. Большевиксен партийĕпе аслă Сталин тавра таччăнрах пĕтĕçер, çĕнтерÿ патне паттăррăн утар. Сире пурне те хамăрăн геройла Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа ырă сунса саламлатăп.

Совет Союзĕн Геройĕ
Майор **Ф. ОРЛОВ.**

КĔТĔР, ЭПИР ÇĔНТЕРÿПЕ ТАВĂРНАТПĂР

Аслă Сталинград патĕнчи хаяр çапăçусем вăхăтĕнче эпĕ тăван яла тăтăшах çыру çырса тăраймарăм. Çитменнине тата хăшпĕр çырусем çитмен те пулас. Çавăн хыççăн вара тăван ялта эпĕ вилнĕ тенĕ сăмах çÿренĕ. Анчах манăн юратнă хĕр, мана çак аслă вăрçа çĕнтерÿ тума йăшă сăмахсемпе ăсатса янă хĕр, вăл сăмахсене ĕненмен, вăл ялан мана кĕтнĕ.

Чĕререн юратнă çын, хамăн тăванăмсем кĕтни мана вилĕме çĕнтерме пулăшрĕ, ирсĕр тăшмана хирĕç паттăр çапăçма вăй-хăват пачĕ. Эпĕ вăрçăн вăрăм та асаплă çулĕ тăрăх Сталинград патĕнчен Пруссие çитрĕм.

Чăваш халăх ывăлĕсем Германире, Югославире, Венгрире, Польшăра Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçаççĕ. Темĕнле йывăр вăхăтсенче те вĕсем тăванĕсене, юратнă хĕрĕсене асра тытаççĕ, вĕсене чĕререн тухакан йăшă сăмахсемпе асăнаççĕ.

Эпир, киле часрах таврăнас тесе, çĕнтерÿ тума васкатпăр. Эсир пире колхозсенче, заводсенче стахановла ĕçленипе пулăшатăр, çĕнтерÿ хыççăн йăшă кăмăлпа кĕтсе илме хатĕрленетĕр. Кĕтĕр пире, хатĕрленĕр. Çĕнтерÿ инçе мар. Часах эпир çĕнтерÿ туса таврăнăпăр.

Салампа **И. ДАНКО.**

Полевая почта 45599 «А»

Гварди красноармеецĕн канашĕсем

Сире, хаклă земляксем, Хĕрлĕ Çар Кунĕ ячĕпе гвардеецла салам яратăп.

Эпĕ фронтра 1942 çултанпа çапăçатăп. Çав вăхăтра сахал мар фрица леш тĕнчене ăсатрăм. Хама та виçĕ хутчен амантрĕç, анчах эпĕ стройран тухмарăм. Халĕ тăшмана хăйĕн çĕрĕ çинче çĕмĕретпĕр.

Эпĕ çамрăксене, пулас воинсене, пĕр-икĕ канаш парасшăн. Чи малтанах, дисциплинăллă пулăр, вăрçă техникине юратса вĕренĕр, тĕрлĕ йывăрлăхсене чăтса ирттерме тата хуть те мĕнле ĕçе те хăвăрт та тĕплĕ тума хăнăхăр. Çак пахалăхсем кашни боецăн çапăçура чи кирлисем пулаççĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар тăшмана çапса хуçрĕ, анчах ăна тĕппипех пĕтерсе тăкман-ха. Тăшман, хăйĕн вилĕмне курса, юлашки чун хавалĕпе çапăçать. Эпир, тăшман çĕрĕ çинче, тискер кайăкăн йăви—Берлин патнелле çапăçса пыракан фронтовиксем, ăна аван туятпăр.

З. КОСТИН.

Икĕ хутчен «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ тата «Мухтав» орденĕ илнĕ.

Полевая почта 03696 «В»

Сирĕн ĕç пире савăнтарать



Хисеплĕ земляксем! Сире эпир, фронтовиксем, Хĕрлĕ Çар Кунĕ ячĕпе сывлăх сунса саламлатпăр.

Эпир, фронтовиксем, Хĕрлĕ Çар Кунне сирĕнтен инçетре паллă тăватпăр. Паян кашни генерал, офицер, воин хăйĕн вăрçă çулĕсенчи пурнăçне аса илет.

Эпĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç нумай çĕрте çапăçрăм. Ржев патĕнчи пĕр çапăçура кăна автоматпа персе хĕрĕх нимĕçе леш тĕнчене ăсатрăм. Ун чухне мана та амантрĕç. Госпитальте сывалнă хыççăн эпĕ татах фронта таврăнтăм. 1943—1944 çулсенче эпĕ Ленинград фронтĕнче пултăм. Эпир ирсĕр нимĕçсене Пулково сăрчĕ патĕнче, Синявино çывăхĕнчи шурлăхра, Нарва, Псков хулисем патĕнче пыра-пыра çапрăмăр.

Вăл вăхăтра эпир «Малалла, Хĕвеланăçнелле», тесе калаттăмăрччĕ, халĕ вара «Малалла, Берлин çине», тесе калатпăр. Мĕншĕн тесен пирĕн çĕнтерÿ çулĕ тÿрремĕнех Берлина илсе пырать. Берлина çитиччен ĕнтĕ пурĕ те 70—80 километр çеç юлчĕ. Çапах та çав кĕске çулăн кашни метрне те хаяррăн çапăçса илме тивет. Вилĕм шăтăкĕ умĕнче тăракан нимĕç тискер кайăкĕ урса кайсах хирĕç тăрать. Аптăрă, уртăр, тулаштăр. Пурпĕрех унăн шалчи тулать. Союзлă виçĕ державăн руководителĕсен Крымра пулса иртнĕ конференци фашистла нимĕç захватчикĕсене пĕтермелли шанчăклă приговора йышăнчĕ.

Хаклă земляксем! Эсир Хĕрлĕ Çара яланах пысăк пулăшу парса тăтăр, тăратăр та. Малашне тата та лайăхрах, вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлĕр. Эсир тылра лайăх ĕçлени пире, Хĕрлĕ Çар воинĕсене, хăвăртрах çĕнтерÿ тума май парать.

Совет Союзĕн Геройĕ **Г. ГАБАЙДУЛИН.**

Черчилльпе Рузвельт Александрия хулинче калаçни çинчен Шурă Çурт пĕлтерни

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, паян каçхине Шурă Çурт çапла пĕлтернĕ: Рузвельтпа пĕрле Александрия хулинче пулнă чухне Черчилль Германие аркатса такнă хыççăнах Англи правительстви пĕтĕм вăя Японие хирĕç кĕрешес ĕçе хума пулни çинчен каласа панă.

Шурă Çуртăн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: «Черчилльпе Рузвельт Египетра тĕл пулнă чухне тăватă сехетрен те каярах калаçма пултарнă пулин те, вĕсем ку тăранччен сÿтсе-явма пултарайман пĕр ыйту тăрăх калаçса татăлма пултарнă. Ку ыйту—Японипе Лăпкă океан çинчи вăрçă ыйтăвĕ пулса тăрать. Совет Российи унта нейтральнăй çĕршыв пулса тăрать.

Германие аркатса тăкнă хыççăнах Англи правительстви хăй аллинчи мĕнпур вăя японецсене хирĕç яма хатĕрри çинчен Черчилль президента уççăнах каласа панă. Унччен Англи правительстви çав вăрçăра çапăçакан хăйĕн вăйĕсене ÿстерме тăрăшĕ».

Александрия хулинче тĕл пулнă вăхăтра США-н Государство Секретарĕ Эдвард Стеттиниус та пулнă. Унтах Лондонран США-н Лондонри посолĕ Вайнант вĕçсе пынă. Вайнантпа президент пĕр вăхăт хушши пĕрле пулнă.

ЧЕРЧИЛЛЬПЕ РУЗВЕЛЬТ ЕГИПЕТРА ПУЛНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Каир хулинчи специальнăй корреспонденчĕ каланă тăрăх, Каирта çапла пĕлтернĕ: США президенчĕ Рузвельт Крымри конференцирен каялла таврăннă чухне Египетра пулнă. Америка крейсерĕ çинче Суэц каналĕн районĕнче вăл Египет королĕпе Фарукпа, Эфиопи императорĕпе Хайле Селассиепе тата Сауд Аравийĕн королĕпе Ибн-Саудпа канашланă.

Америкăна тухса каяс умĕн Рузвельт Александрия хулинче Черчилльпе канашланă.

АЛЖИРТА ДЕ ГОЛЛЬПЕ ТĔЛ ПУЛМА РУЗВЕЛЬТ СĔННИ ÇИНЧЕН ШУРĂ ÇУРТ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Шурă Çуртра паян çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: «Францин Вăхăтлăх Правительствин председательне де Голль генерала Рузвельт президент хăйпе Алжирта тĕл пулма сĕннĕ.

Вăл сĕнĕве де Голле Парижра Кеффери посол панă. Ăна президент Алжира пыриччен ултă кун малтан Крымри Ялтăран янă.

Хăйĕн çырăвĕнче президент генерала çапла пĕлтернĕ: Эпĕ де Голльпе Франци çĕршывĕнче питĕ тĕл пуласшăнччĕ, анчах та вăхăт сахаллипе Парижа çитме май памасть, тенĕ. Ялтăран чĕнсе каланине президент çапла вĕçленĕ: Алжирта тĕл пуласси çинчен тунă сĕнÿ Франци лидерĕшĕн килĕшÿллĕ пулмалла, тенĕ.

«Государство ĕçĕсем генерала Алжира пыма чăрмантараççĕ», тесе калакан хыпара илсен, президент питĕ кăмăлсăр пулнă.

Францине Пĕрлешÿллĕ Штатсене иккĕшне те тивекен интересссен ыйтăвĕсене—тенĕ президент,—татса памалла. Тăван çĕршыва тухса кайиччен эпĕ генералпа питĕ тĕл пуласшăнччĕ».

ДЕ ГОЛЛЬ АЛЖИРТА РУЗВЕЛЬТПА ТĔЛ ПУЛМА КИЛĔШМЕННИ ÇИНЧЕН ФРАНЦИРЕ ОФИЦИАЛЬНĂЙ ЙĔРКЕПЕ ПĔЛТЕРНИ

ПАРИЖ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Франци правительстви пуçлăхĕн канцелярийĕ каланине пĕлтерет:

«Февралĕн 12-мĕшĕнче 17 сехетре де Голль генерал США-н посолне Кеффериe йышăннă. Коффери ăна Рузвельт çырăвĕ çинчен пĕлтернĕ. Çырура Рузвельт президент Кеффериe 1944 çулхи ноябрь уйăхĕнчен пуçласах Франци правительстви ăна Парижа пыма чĕннине пурнăçлама пултарайман пирки хурланни çинчен пĕлтерме хушнă. Ун вырăнне Рузвельт Франци республикин Вăхăтлăх Правительствин пуçлăхне Алжира пырса унта тĕл пулма сĕннĕ. Де Голль пыма килĕшес пулсан, хăçан тĕл пулассине ăна каярах пĕлтермелле пулнă.

Де Голль посола панă ответра çапла каланă: Рузвельт Франци портне пыма шутлани çинчен хавасланса итлетĕп, тенĕ. Унтан де Голль çапла хушса хунă: çав порта пыма чĕнни маншăн кĕтмен çĕртен пулчĕ, мĕншĕн тесен нумай ĕçсем мана Парижра пулма хушаççĕ. Союзлă правительствăсен виçĕ руководителĕн тата вĕсен советникĕсемпе эксперчĕсен конференцийĕ тин çеç пулса иртнĕ хыççăн уйрăмах Парижра пулмалла, Франци вăл конференцире пулман, унта хускатнă нумай ыйтусем çинчен нимĕн те пĕлмест, тенĕ. Де Голль посола Рузвельта Парижра курассине шанма пăрахманни çинчен ĕнентерсе калама ыйтнă. Правительство тата пĕтĕм халăх Рузвельта кирек хăш вăхăтра та кĕтсе илме хатĕр, тенĕ. Конференци иртнĕ хыççăн Франци правительстви тата унăн тивĕçлĕ органĕсем Ялтăри конференцин решенийĕсем пирки Францине союзлă правительствăсем пĕр-пĕрне хăйсен шухăшĕсене пĕлтерме хатĕрленеççĕ».

НИМĔÇ ДИВИЗИЙĔСЕНЕ ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНТĔНЧЕН КУÇАРНИ ÇИНЧЕН «ТАЙМС» ХАÇАТ КАЛАНИ

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн специальнăй корреспонденчĕ Парижран çапла çырать: «Тăшманăн темиçе дивизине, вăл шутра Арден патĕнчи çапăçусем вăхăтĕнче сухалнă 6-мĕш танковăй армие, юлашки вăхăтра хĕвеланăç фронтĕнчен илсе кайнă пуль, тесе шутлама пулать. Хĕвеланăç фронтне халĕ Францире çулла тунă наступлени хыççăнчи сахал вăйсем çеç тытса тăраççĕ. Çав дивизисенчен хăшне-пĕрне вырăс фронтне куçарнă пирки нимĕн иккĕленмелли те çук».

ГРЕЦИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔПЕ ЭАМ ЛИДЕРĔСЕМ АФИНЫ ХУЛИНЕ ТАВĂРАННИ

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: икĕ уйăх хушши Трикакале хули хыçĕнчи тусем хушшинче Фессалире пурăннă хыççăн Грецири коммунистсен партийĕн тата ЭАМ-ăн 250 деятелĕ Афины хулине таврăннă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—25.

НТ 00279 Типографи № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000